27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944 МАЙ 31 юнкун 107(6602) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕ, ЧАССР Верховнăй Совечĕ тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

Совет Информаци Бюровĕнчен

МАЙĂН 29-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Майăн 29-мĕшĕнче фронтсенче палăрмалла улшăнусем пулман.

Майăн 28-мĕшĕнче сывлăшри çапăçусенче тата зенитлă артиллери тăшманăн 33 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

ПИРĔН АВИАЦИ ЙЫШЛĂН ВĔÇСЕ КАЙСА ТĂШМАН АЭРОДРОМĔСЕНЕ ТАПАННИ

Пали ирхине пирĕн авиаци йышлăн вĕçсе кайса Романша Хуши хулисен районĕнче (Румыни) тăшман аэродромĕсене пырса çапнă. Тапăну вăхăтĕнче çав аэродромсенче нимĕç самолечĕсем нумай пулнă. Пирĕн летчиксем нимĕçсен зенитлă артиллерине пусарса лартнă та, тесене хутчен çавăрăнса пырса, бомбăсем пăрахнă тата тупăсемпе, пулеметсемпе персе нимĕçсен 60 самолетран кая мар сĕмĕрсе тăкнă.

Пирĕн самолетсем пурте хăйсен базисене таврăннă.

* * *

Лупк хулинчен сурçĕр-хĕвеланăçнелле пĕр участокра тăшман пирĕн подразделение атакăланă. Пысăк çухатусем тÿссе, нимĕçсем пирĕн оборонăн малти хĕррине çитнĕ те пирĕн траншейăсене кĕрсе кайнă. Унта аç вĕçсĕн тытăçу пуçланса кайнă. Çак вăхăтра çапăçу пыракан вырăна пирĕн Голованов капитан командир шуса ертсе пыракан автоматчиксен роти пырса çитнĕ. Рота пирĕн траншейăсенчи тăшмана атакăланă. Нимĕçсем вара васкасах каялла чакнă. Пирĕн траншейăсенче нимĕçсен 40 вилли тата 70 аманнă салтакĕ ытла вырта юлнă. Пирĕн боецсем пĕр миномет, 6 пулемет тата 52 винтовка тытса илнĕ.

Станиславл хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнелле гитлеровецсем этрачĕсен çапăçса разведка туса хăтланнă. Пăшалсемпе, пулеметсемпе персе, пирĕн подразделенисем тăшмана сапаласа янă. Нимĕçсем 200 салтакка офицере çити вилнĕ. Тытăна илнисем пур.

Совет зенитчикĕсем, тăшман авиацийĕ пирĕн çарсен тăнă вырăнсене пырса тапăннисене сире-сире ярса, нимĕçсен 5 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Витебск хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнелле пирĕн сывлăшри разведка тăшманăн пĕр шыв урлă хывнă каçсине курнă. Совет летчикĕсене çак каçса сĕмĕрсе тăкма приказ панă. Вара летчиксем çĕрле çак шыв патне пĕр çаврăм вĕçсе çитнĕ те, бомбăсем пăрахса, çак каçса иле аттарнă. Нимĕçсен каçа çывăхĕнче тăнă 10 автомашинине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Майăн 28-мĕшĕнче нимĕçсен 30 самолечĕ пирĕн Финн заливĕнчи пĕр вăрçă объектне тапăнма хăтланнă. Зенитлă артиллери тата Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн истребителĕсем тăшман самолечĕсене пурне пĕр чарнă. Сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 5 истребителне тата пĕр бомбардировщикне персе ÿкернĕ. Унсăр пуçне зенитлă артиллери тăшманăн 2 бомбардировщикне персе антарнă. Пирĕн авиаци çухатусем пулман.

* * *

Калинин облаçĕнче вĕренекен партизансен темиçе ушкăнĕ майăн малтанхи çур уйăхĕ хушшинче тăшманăн 18 çар эшелонне ÿпĕнтерсе янă. Шоссе çулĕсенче аххăл çулсем çинче партизансем 2 кĕпере çĕмĕрттерсе янă, нимĕçсен 4 çăмăл тата 69 грузовой автомашинине пĕтерсе тăкнă. Çапăçусенче тата засадăсенче персе, нимĕçсен 150 салтакĕпе офицерне пĕтерсе вĕлернĕ. Нимĕçсен 12 салтакне тытса илнĕ.

Днестр шывĕн сылтăм енче Тирасполь хулинчен сурçĕр-хĕвеланăçнерехре тăракан пирĕн çарсем майăн пĕрремĕш çур уйăхĕнче тăшман танкĕсемпе пехотин пысăк вăйĕсен атакисене ăнăçлăн сирсе яни çинчен хай вăхăтĕнче пĕлтернĕччĕ. Ак мĕн хутчен çавăрăнса пырса, бомбăсем пăрахнă тата тупăсемпе, пулеметсемпе...

Ака каласа кăтартассăн çав çапăçусене пулнă тытăнна лекнĕ нимĕç салтакĕсем.

Нимĕçсен 55-мĕш пехотнăй полкĕн тытăнна лекнĕ фельдфебелĕ Рихард Гесс çапла каласа панă: «Дивизи командирĕ генерал-лейтенант Циммер пире командованин приказне вуласа пачĕ. Приказра çапла çырнăччĕ: «Кăç пулăнчи вырăссен кĕпер умĕнчи укрепленине пĕтерсе тăмалла та вырăссене Днестр шывĕн леш енне хăвалса ямалла». Атака умĕн салтаксене, хăюлăх çапăçма, эрех пачĕç. Ман взводăн тахçан çапăçма, хăвна шăтăк умне туха, çак позицие подкреплени пырса çитичен тытса тăмалла, тесе çапла. Танксене чармалли шăтăк умне эпир аванах çитрĕмĕр, анчах ун унтан вара ут те, манăн салтаксем те çăмăлса тухаймарĕç. Пире вырăссен сасартăк çапăçва илчĕç те эпир тытăнна лекрĕмĕр».

Нимĕçсен 21-мĕш пехотнăй полкĕнчен тытăнна лекнĕ ефрейтор Ганс Цигер (Франкельмюллер çапла каласа кăтартнă: «Пĕр уйăхра пулса иртнĕ атакăсенче эпир питĕ пысăк çухатусем тÿсрĕмĕр. Вырăссем контратака пуçласа ярсан, чĕрĕ тăрса юлнă салтаксемпе офицерсем пурте каялла тарма пуçларĕç. Сурасене çыххан пуринче ĕçлекенĕн те тарса пĕтрĕç. Аманнисене пăрахса хăварчĕç. Вырăссем нача тата Шефанель фельдфебелĕсем аманнă салтаксене пĕрле тытăна илчĕç».

Нимĕçсен 3-мĕш танкăллă дивизийĕн 6-мĕш танковăй полкĕн 6-мĕш ротинчен тытăнна лекнĕ радист Руди Генрунгнау: «Рота çапла каласа кăтартнă: «Çак çулхи çуркунне çапла калла чакнă чухне пирĕн дивизи хăйĕн мĕнпур техникине тенĕ пекех çухатса пĕтерчĕ. Майăн 6-мĕшĕнче пирĕн дивизие çĕнĕ техника илчĕ. Вырăссен хушшин эпир машинăсене тĕрĕслерĕмĕр, мĕнле пулсан та тупăсемпе апарăр. Майăн 10-мĕшĕнче пирĕн рота командирĕ Фельдгейм оберлейтенант пире ыран атака пухрĕ те ыранхи атакăна пуçлана тăмалла тесе вулать. Тул çутăлсан ним танкăсем вырăссен позицийĕсене патшелле кĕрлесе пырса кĕрекех, мана пĕр тупа пенĕ, пире вырăссен шăвăн хачă. Пирĕн тата пирĕн пĕр хамăр çухатусемпе вырăссен артиллерийĕн вăйлăпатне тÿссе кирла пекрĕ. Çак сехет хушшинче 27 танк пĕтрĕ. Санраа пĕтрĕ пекех. Танк командирĕ Пельре Инсерт тата стрелок Шевцер вилчĕç, эпĕ вара тытăнна лекрĕм».

Кунта çакă палăрса тăрать: çав çапăçусенче совет çарĕсен енчен нимĕçсем вăйĕ пĕтермен, тата пехотăн малти подразделенийĕсем пулнă. Анчах та гитлеровецсен тыткăна лекнĕ салтакĕсем каласа панă тăрăх, совет çарĕсен Днестр çинчи кĕпер умĕнчи укрепленине пĕтерме хăтланса, нимĕçсен пайтах çын тата техника пĕтнĕ.

Ленинградра троллейбус çÿреме пуçланă

Виçĕ çула яхăн çÿремесĕр тăнă хыççăн, майăн 24-мĕшĕнче Ленинград урамĕсемпе каллех троллейбуссем çÿреме пуçланă.

Çĕнĕрен юсанă, сăрланă, йăлтăртатакан машинăсем халĕ Сызрань урамĕпе Адмиралтейство хушшинче çÿреççĕ. Унта троллейбуссем малтан палăртнă срокран 37 кун маларах çÿреме пуçланă. (ТАСС).

Вокзалсене тасатса йĕркене кĕртмелли çирĕмкунлăх

Чугун çул станцийĕсемпе вокзалсене тасатса йĕркене кĕртмелли çирĕмкунлăх вĕçленчĕ. Çав çирĕм кунлăха 600.000 комсомолецпа çамрăк железнодорожника яхăн хутшăннă. Вĕсем 4.546 вокзала тасатса культурăллă туса хунă, 4 миллион тăваткăл метр территорине тасатнă, 2.345 тонна металлом пухнă. Çамрăксем хăйсен вăйĕпе 896 вокзала юсанă тата шуратнă, илем кÿрекен йывăççемпе çырла йывăççисем темиçе вунă пин тĕп лартнă. Çирĕмкунлăх Байкал леш енчи, Амур, Свердловск тата Октябрьски чугун çулсем çинче питĕ ăнăçлăн иртнĕ.

ЦК ВЛКСМ тата НКПС комсомол организацийĕсен çак пуçарăвне ырланă, комсомолецсемпе çамрăк железнодорожниксене çак ĕçе малалла активлăн туса пыма чĕннĕ. (ТАСС).

Шкул ачисемпе студентсен çар лагерĕсем

Июнь уйăхĕн пуçламăшĕнче республикăсен, облаçсен тата хуласен çар комиссариачĕсем вăтам шкулсен аслă класĕсенче вĕренекен ачасемпе техникумсен студенчĕсем валли лагерьсем уçаççĕ. Вĕренекенсем ик-виç эрне хушши çав лагерьсенче пурăнаççĕ.

Мускав патĕнче пирĕн çĕршывра чи пысăк лагере туса пĕтерессĕ ĕнтĕ. Вĕренмелли хирсене уйăрса хунă, пемелли вырăнсене хатĕрленĕ, палаткăсем лартнă.

Грузире лагерьсене вăрманлă вырăнсенче тата юханшывсемпе кÿлĕсен улăхĕсенче тăваççĕ. Аджарипе Абхазире вĕренекенсем тинĕс çумĕнчи районсене каяççĕ. Лагерьсем валли командирсемпе врачсене пухса çитернĕ ĕнтĕ. Çар чаçĕсен командирĕсем çамрăксене çар ĕçне вĕрентмешкĕн опытлă офицерсем, хĕçпăшалсем, наглядăй пособисем уйăрса панă.

Амур заливĕн хĕрринче Тихоокеанская ятлă Курорт çывăхĕнче Инçетри Хĕвелтухăçĕнчи шкул ачисен лагерĕ вырнаçнă. Унта кашни сменăра 450—500 çын пулать.

Свердловскра вĕренекен çамрăксем Осоавиахимăн область отделĕн лагерĕнче пулаççĕ. Врач комиссийĕсем лагерьсене яма вĕренекенсене суйласа çитереççĕ ĕнтĕ. (ТАСС).

ÇУРАКИНЕ ВĔÇЛЕМЕЛЛИ ВУНĂКУНЛĂХ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

(Майăн 30-мĕшĕ тĕлне)

Районсем	мĕнле вырăн
Красноармейски	1
Вăрнар	2
Чурачăк	3
Сĕнтĕрвăр	4
Çĕрпÿ	5
Муркаш	6
Элĕк	7
Сĕнтĕр	8
Шупашкар	9
Вăрмар	10
Калинино	11
Куславкка	12
Октябрьски	13
Елчĕк	14
Шăхасан	15
Тăвай	16
Етĕрне	17
Советски	18
Ишлей	19
Канаш	20
Комсомольски	21
Йĕпреç	22
Чкаловски	23
Çĕмĕрле	24
Улатăр	25
Первомайски	26
Пăрачкав	27
Хĕрлĕ Чутай	28
Шăмăршă	29
Кувакино	30

Чурачăк районĕ çураки планне тултарнă

ЧУРАЧĂК, майăн 30-мĕшĕ. (ТЕЛЕФОНПА). Районри колхозсем паян çуртыррисем акмалли плана тултарчĕç. Планпа çирĕплетнĕ 13.450 гектар вырăнне 13.463 гектар акса хăварнă. Вăл шутран пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши тырăсем 11.797 гектар, кантăр 235 гектар, çĕрулми 979 гектар, пахча-çимĕç 92 гектар, выльăх кăшманĕпе силос культурисем 140 гектар, пĕр çул хушши ÿсекен курăнсем 698 гектар, махорка 60 гектар т. ыт. те акнă.

Çуракине ăнăçлăн вĕçлессишĕн

ИШЛЕЙ, майăн 30-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Пĕрчĕллĕ тырăсене акса пĕтернĕ Тăрăн, Кипечкасси, Салапайкасси, Алино ялсоветĕсенчи колхозсем вунăкунлăх пуçламăшĕнче ферма çумĕнчи участоксене 25 гектар, çар çыннисен çемьисем валли 13 гектар акса хăварчĕç. Вăрлăхсене яровизацилесе акнă. Фермăра ĕçлекенсен вăйĕпе Мамка ялсоветĕнчи «Искра» колхоз 3,5 гектар, «Ырашпулăх»—3,5 гектар урпа акнă. Алино ялсоветĕнчи пилĕк колхоз 27 гектар яровизациленĕ çĕрулми лартнă. «Броневик» колхоз 2 гектар çырла йывăççисем куçарса лартнă.

«Акара» колхоз çуракине вĕçленĕ хыççăн «Красная знамя» колхоза лашасем парса пулăшать. Колхозсенче вунăкунлăхра çуракине ăнăçлăн вĕçлессишĕн ăмăртса ĕçлеççĕ.

Г. СЕРЕБРЯКОВ,
Райçĕрĕç пайĕн агрономĕ.

Тырă акмалли çĕр лаптăкне аслатсах пыраççĕ

Йĕпреç районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз районра малта пырать. Çак колхоз 1934 çулта вăрмана куçса ларнă. Ку вырăнта колхоз пуличчен акма юрăхлă çĕр пĕр гектар та пулман. Колхозниксем тункатасене кăкласа акма юрăхлă çĕр тăвассишĕн тимлĕн ĕçленĕ. Кăçалхи çул тĕлне 150 гектар акма юрăхлă çĕр хатĕрленĕ.

Вăрçă çулĕсенче, ытти колхозсенчи пекех, çак колхозри вăйпитти арçынсем фронта тухса кайнă. Колхоз хĕрарăмĕсем вăрçă вăхăтĕнче вăрманта тункатасем кăкласа 17 гектара яхăн çĕр хатĕрлерĕç. Колхозницăсене колхозри ватă стариксем ертсе пынă.

Уйрăмах 70 çулхи Н. Андреев, 62 çулхи С. Железов тăрăшса ĕçленĕ. Кăçалхи çуракинче те вĕсем тырă акнă, çав хушăрах çамрăксене суха тума, сÿре сÿрелеме вĕрентнĕ. Акă 15 çулхи çамрăк И. Ефимов ĕç нормине тăтăшах 125—130 процент тултарса пычĕ. Колхоз пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши тырăсене майăн 20-мĕшне пĕтĕмĕшпех акса пĕтерчĕ, çавăн пекех майăн 22-мĕшĕ тĕлне çĕрулми те лартса пĕтернĕ.

Çураки вĕçленчĕ. Çуракинчен лашасем самăр та вăйлă тухрĕç, мĕншĕн тесен вĕсене лайăх пăхаççĕ.

Çуракинче колхозниксем уйхирте ырми-канми ĕçлерĕç. М. Краснова юлташ ĕç нормине 125 процент таранччен тултарса пычĕ, çураки пĕтсенех тунката кăртнă çĕрте ĕçлеме пуçларĕ. Тунката кăртнă çĕрте уйрăмăнах 2-мĕш звено мала тухрĕ. Планпа 1,7 гектар кăртса тасатмалла пулнă пулсан, ку звено 2 гектар çинче кăртнă. Звеновод М. Никитин кашни колхозница ĕçне тĕрĕс учета илсе пырать.

Колхозра агитациллĕ-массăллă ĕç те аван пырать. Ялти учитель Т. Павлов юлташ колхозниксене фронтри çитĕнÿсем çинчен яланах ăнлантарса парать.

П. КУРАКОВ.

Çуракине вĕçлемелли вунăкунлăх

Чăваш АССР Наркомземĕпе ВКП(б) Обкомĕн ялхуçалăх отделĕ тăратнă тăрăх, тракторпа çуркунне тумалли ĕçсен планне срокчен пурнăçланăшăн ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп Хăми çине çаксене кĕртнĕ:

34. **Тăвай МТС-ĕ** (директорĕ **И. Я. Белорусов** юлташ, парторганизаци секретарĕ **А. П. Порфирьева** юлташ, старши механикĕ **И. Я. Яковлев** юлташ). МТС тракторпа тумалли ĕçсен планне 1944 çулхи майăн 25-мĕшĕ тĕлне 103,5 процент тултарнă.

Чи лайăх бригадирсем: **И. П. Кириллов** юлташ, унăн бригади плана 148,2 процент тултарнă, 420 килограмм горючи перекетлесе хăварнă; **И. Е. Егоров** юлташ, унăн бригади плана 137,6 процент тултарнă, 305 килограмм горючи перекетленĕ; **С. Т. Хайдуков** юлташăн бригади плана 126 процент тултарнă, 380 килограмм горючи перекетленĕ, **А. М. Мукин** юлташăн бригади плана 113 процент тултарнă, 270 килограмм горючи перекетленĕ, **П. К. Кузьмин** юлташăн бригади—108,4 процент тултарнă, 160 килограмм горючи перекетленĕ, **А. С. Баданов** юлташăн бригади—106,7 процент тултарнă, 210 килограмм горючи перекетленĕ.

Чи лайăх трактористсем: **Д. Е. Ермолаева** тата **Е. П. Петрова** юлташсем. Вĕсем СТЗ маркăллă тракторпа план тăрăх 45 гектар сухалас вырăнне кашниех 93-шер гектар сухаланă.

Çуракинче тухăçлă та лайăх ĕçлечĕшĕн, ĕççынни депутачĕсен Сĕнтĕр райсовечĕн исполкомĕпе ВКП(б) райкомĕ тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп Хăми çине çак трактор бригадисемпе колхозсене кĕртнĕ:

35. **8-мĕш номерлĕ трактор бригади** (бригадирĕ **З. Н. Толикин** юлташ). Вăл тракторпа çуркунне тумалли ĕçсен планне 119 процент тултарнă (340 гектар вырăнне 407 гектар сухаланă).

М. Данилова, О. Бычкова трактористкăсем кашни сменăра 4 гектар вырăнне кашниех 6-шар гектар сухаланă.

36. **2-мĕш номерлĕ трактор бригади** (бригадирĕ **К. Ф. Фомин** юлташ). Вăл тракторпа çуркунне тумалли ĕçсен планне 112 процент тултарнă (340 гектар вырăнне 382 гектар сухаланă)

М. Пузырева трактористка СТЗ—НАТИ маркăллă тракторпа кашни сменăра 7 гектар вырăнне 10—11-шер гектар сухаланă.

37. **3-мĕш номерлĕ трактор бригади** (бригадирĕ **Ф. П. Питернов** юлташ). Вăл тракторпа çуркунне тумалли ĕçсен планне 111 процент тултарнă (280 гектар вырăнне 312 гектар сухаланă).

А. Кубуркина, Бочкарева трактористкăсем кашни сменăра 5—6-шар гектар сухаланă.

38. **12-мĕш номерлĕ трактор бригади** (бригадирĕ И. А. Андреев юлташ). Вăл тракторпа тумалли ĕçсен планне 109 процент тултарнă (280 гектар вырăнне 307 гектар сухаланă).

39. **Мичурин ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ **И. Я. Ягитнин** юлташ). Колхоз çуракине 7 ĕç кунĕнче вĕçленĕ. Çуракинче уйрăмăнах (сухаçсем **А. Кольцова** тата **А. Маринкина** юлташсем кулленхи нормăна 200 процента çити тултарса пынă.

40. **«Ударник» колхоз** (председателĕ **П. Г. Сыров** юлташ). 111 гектар акас вырăнне 112 гектар акса çуракине вĕçленĕ, ĕç пахалăхĕ аван.

Н. П. Петров бригади аван ĕçленĕ, вăл çураки планне 8 ĕçкунĕнче тултарнă. Акакансем **Д. Павлов, С. Иданов** кашни кунхи нормăна 250—300 процента çити тултарнă.

41. **1905-мĕш çул ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ **В. Г. Елагин** юлташ). Колхоз районра çуракине чи малтан, кĕске срокра, лайăх пахалăхпа вĕçленĕ. 120 гектар акас вырăнне 122 гектар акнă.

42. **«КИМ» колхоз** (председателĕ **И. Е. Патеев** юлташ). Колхоз çуракине 9 ĕç кунĕнче иртттернĕ, 243 гектар акас вырăнне 245 гектар акнă. Майăн 20-мĕшĕ тĕлне çĕрулми лартассине те вĕçленĕ.

Çуракинче уйрăмăнах **И. В. Савельев** юлташăн бригади лайăх ĕçленĕ, вăл 7 ĕçкунĕнче акса пĕтернĕ.

Сĕнтĕрпе Вăрмар МТС-ĕсем тракторпа çуркунне тумалли ĕçсен планне тултарнă

Сĕнтĕр МТС-ĕ (директорĕ Чупраков юлташ) тракторпа çуркунне тумалли ĕçсен планне тултарнă, 3.830 гектар вырăнне 3.839 гектар сухаланă.

Малти вырăна 12 номерлĕ бригада тухнă (бригадирĕ И. Андреев юлташ), вăл плана 145 процент тултарнă, 150 килограмм горючи перекетленĕ. Çак бригадăна лайăх ĕçленĕшĕн МТС-ăн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне панă. З. Толикин юлташăн бригади плана 139 процент, Питернов юлташăн бригади 130 процент, Фомин юлташăн бригади 128 процент тултарнă.

Вăрмар МТС-ĕ (директорĕ Петров юлташ) çуркунне тракторпа тумалли ĕçсен планне 101 процент тултарнă, 3.807 гектар вырăнне 3.848 гектар сухаланă. МТС-ра уйрăмах В. Лукин юлташ ертсе пыракан 9-мĕш номерлĕ бригада аван ĕçленĕ, вăл хăйĕн планне 167 процент тултарнă, 250 килограмм горючи перекетлесе хăварнă. Ун хыççăн 13 номерлĕ бригада (бригадирĕ И. Александров юлташ) пырать, вăл плана 147 процент тултарнă, 135 килограмм горючи перекетленĕ. В. Никандров ертсе пыракан 8-мĕш номерлĕ бригада та çуркунне тумалли ĕçсен планне 131 процент тултарнă.

15 колхоз акса пĕтерчĕ

СОВЕТСКОЕ, майăн 29-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Чылай колхозсем çураки ĕçĕсене вĕçлесе пыраççĕ. Районри 15 колхоз пур йышши тырăсене те акса пĕтерчĕ. Кăçал уйрăмăнах «Комбайн» тата «За коммунизм» колхозсем çураки вăхăтĕнче лайăх ĕçленине палăртмалла. «Комбайн» колхоз (председателĕ Абрамов юлташ) çураки планĕпе пăхнă пур тырăсене те майăн 22-мĕшĕ тĕлне, районра пуринчен малтан, акса пĕтерчĕ. Планран ирттерсе 7,25 гектар тĕштырă акрĕ. Çак колхозра Н. Кокорин юлташ ертсе пыракан бригада мала тухрĕ. Бригадăри сухаççсем Е. Мухина, Т. Ермакова, Е. Абрамова, Е. Малышева, Е. Николаева, Е. Александрова юлташсем кулленхи нормăна 130—160-шар процент тултарса пычĕç. Акакансем Д. Филиппов, А. Пахомов тата А. Осипов юлташсем те кулленхи нормăна 115—125 процент тултарчĕç. Старши конюх Максим Юманкин лашасене лайăх пăхрĕ. Вăл пăхакан лашасем акара лайăх ĕçлерĕç, ывăнни те пулмарĕ.

«За коммунизм» колхоз (председателе Н. Григорьев юлташ) çураки планне 9 кунра (майăн 22-мĕшĕ тĕлне) 100 процентчĕпех тултарчĕ. Ĕç пахалăхĕ лайăх тата агротехникăллă мероприятисене те кунта пĕр пăрахланмасăр пурнăçласа пынă. Çак колхозри В. Васильев, Е. Михайлова, Н. Федорова юлташсем кашни кунах ĕç нормине 110—130 процент тултарнă, колхозра ака вăхăтĕнче пĕрлешÿллĕ столовăй ĕçлерĕ.

Фермăсем çумĕнчи участоксене районĕпе 68 гектар акнă. Анчах «Большевик», «Пучах» тата ытти хăшпĕр колхозсем çак ĕçе пачах тытăнман. «Труд» колхозра (председателĕ Дмитриев юлташ) çураки ĕçĕсем вăрăма тăсăлчĕç. Кунта ĕçе начар организациленĕ. Дмитриев юлташ уйра сахал пулать, ака ĕçне ертсе пымасть.—«Лашасем вăйсăр, çавăнпа та ака ĕçĕ вăраха тăсăлчĕ»,—тет. Анчах та лашасене уйра тăрантарассине организацилемен. Çавăн пекех «Красный партизан» колхозра та (председателĕ Яковлев юлташ) ĕçсем япăх. Кунта пурĕ те пĕр 50 процента яхăн çеç акнă.

Çав вăхăтрах эпир колхозсене социализмлă пулăшу парассине организацилерĕмĕр. Çак кунсенчех çуракине пĕтĕмпех вĕçлессишĕн пĕтĕм вăя хурса кĕрешетпĕр.

П. НИКИТИН,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Вăйлă тырпулшăн

Муркаш районĕнчи Сарчакри Киров ячĕпе тăракан колхоз çуракине кĕске вăхăтра пысăк пахалăхпа вĕçлерĕ. Майăн 12-мĕшĕнче çурхи тырăсене пĕтĕмпех акса пĕтерчĕ. Акмалли çĕрĕн 50 процентне яровизациленĕ тата тĕрлĕ имçамсемпе чÿхенĕ вăрлăх акнă.

Ака ĕçĕнче икĕ бригада пĕр-пĕрне ăмăртса ĕçлерĕç. Сухаçăсем П. Лукина, А. Степанова, С. Иванова, Е. Алексеева тата Д. Никифоров колхозниксем кулленхи нормăна 150—175 процент тултарса пычĕç.

Ака ĕçĕнче ĕçлекенсем валли уйрăм столовăй организациленĕ, кунта кунне икĕ хут вĕри апат çитернĕ. Ака вăхăтĕнчех 7 гектар çинчи кĕрхи калчасене вырăнти удобренисемпе апатлантарнă тата 10 гектар çинчи 2-мĕш çулхи клевера тĕрлĕ сумкурăкĕсенчен тасатса, спелтен сÿрелесе тухнă.

Ака вăхăтĕнче 2 номер стена хаçачĕ тата кашни бригадăрах икĕ кунта пĕрре боевой листок кăларнă. Отечественнăй вăрçă инваличĕ Ф. Васильев кулленех уйра Хĕрлĕ Çарăн çитĕнĕвĕсем çинчен хаçат вуласа панă. Кашни колхозник ир пуçласа каçченех колхоз производствинче вăйлă тырпул туса илессишĕн пĕтĕм вăйне хурса ĕçленĕ.

Хăйĕн çĕрне акнă вăхăтрах Киров ячĕпе тăракан колхоз хăйпе кÿршĕллĕ «Восток» колхоза социализмлă пулăшу йĕркипе 6 гектар çĕр сухаласа пачĕ.

В. НИКИФОРОВ,
Райçĕрĕç пайĕн участокри агрономĕ.

Икĕ колхозра икĕ тĕрлĕ ĕç

СĔНТĔР, майăн 30-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Районри колхозсем ака ĕçĕсене вĕçлесе пыраççĕ. «Колос» колхоз 8 ĕç кунĕнче 337 гектар акса хăварчĕ. Çар çемьисене пулăшмалли фонда планран ирттерсе 3 гектар ясмăк, 6 гектар вика акрĕ. Колхозра агротехникăллă мероприятисене ăнăçлăн пурнăçласа пыраççĕ. Кĕрхи калчасене 60 гектар çине иккĕмĕш хут тислĕкпе апатлантарнă. 10 гектар урпа тата 10 гектар тулă акнă вырăнсене мульчировани тунă.

Курăк вăрлăхĕсем питĕ кирлине шута илсе, тимофеевка акнă 10 гектара тата шурă клевер акнă пĕр гектара вăрлăх участокĕ тунă, вăрлăх участокĕсене пăхса тăма ятарласа звено организациленĕ, звенона агроном Иванщиков ертсе пырать.

Колхоз пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши тырăсем акса пĕтернĕ, çĕрулми лартассипе кантăр акассине те паян-ыранах вĕçлессĕ. Колхозниксем выльăх апачĕн çирĕп базине тăвассишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. 35 гектар клевер çинчен çумкурăкĕсене тасатнă.

Анчах районри хăшпĕр колхозсенче ака ĕçĕ ытла та вăрахăн пырать. «Крестьянская газета» колхоз (председателĕ Кожанов юлташ) çĕрулми лартассине тата каярах юлса акакан тырăсене акассине питĕ сÿрĕккĕн туса пырать. Ака тума ирхине 9 сехетре тухаççĕ те каçхине 7—8 сехетрех таврăнаççĕ. Кунта колхозăн ака ĕçĕсем пĕтиччченех колхоз председателĕн, бригадирсен, счетоводăн кил вырăнĕсене сухалама тытăннă, çав вăхăтрах çар çыннисен семйисемпе колхозра лайăх ĕçлекен колхозниксен кил вырăнĕсене сухалас пирки никам та шутламасть. Паллах, Кожановăн çакăн пек киревсĕр ĕçĕсем колхозниксене кÿрентереççĕ. Çак колхозра агитациллĕ-массăллă ĕç те питĕ начар пулса пырать. Агитколлектив руководителĕ Семенова юлташ колхозниксем хушшинче ĕçлессине йĕркеллĕ организацилемен. Агитаторсем сайра хутра çеç уйра пулаççĕ, çавăнпа колхозра ĕç мĕнле пыни çинчен тĕплĕн пĕлмеççĕ.

М. КАРПОВ.

Улатăр МТС-ĕнче Кудельнин бригади мала тухнă

УЛАТĂР, майăн 30-мĕшĕ. (**Телефонпа**). С. В. Кудельнин ертсе пыракан 3-мĕш номерлĕ трактор бригади 116 гектар вырăнне 246 гектар сухаласа, çуркунне тракторсемпе тумалли ĕçсен планне 201 процента яхăн тултарнă. Çак бригадăри Кошелевпа Матвеев трактористсем сменăра 4,5 гектар сухаланă. Кудельнин юлташ бригадине МТС-ăн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне панă. Кошелевпа Матвеев юлташсене премиленĕ.

Çак МТС-ри М. К. Степанов юлташ ертсе пыракан бригада та çуркуннехи ĕçсен планне 131 процент тултарнă, 297 гектар вырăнне 389 гектар сухаланă. Çак бригадăри Малыгина, Степанов тата Бушуев трактористсем нормăна ытлашшипех тултарса ĕçлеççĕ.

Махорка акаççĕ

Вăрнар районĕнчи Анаткас Уравăшри Киров ячĕпе тăракан колхозра махорка акса пăхса çитĕнтерме уйрăм звено тунă. Звенона Зоя Никитина ертсе пырать. Çак звено 1.800 тăваткăл метр çине калчаласа махорка акнă.

Я. АБРАМОВ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Ялхуçалăхĕнче малта пыракансене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

(Юлашки. Пуçламăшĕ „Чăваш Коммуни" 85-мĕш, 92-мĕш, 94-мĕш, 95-мĕш, 96-мĕш, 98-мĕш, 99-мĕш, 100-мĕш, 101-мĕш, 102-мĕш, 105-мĕш тата 106-мĕш номерĕсенче).

ЕЛЧĔК РАЙОНĔ ТĂРĂХ

26. Владимир Михайлович **Немцова** — ВКП(б) райкомĕн пропагандăпа агитаци отделĕн заведующине.
27. Александр Никитич **Никитина** — райçĕрĕç пайĕн кок-сагыз лартса ÿстерес тĕлĕшпе ĕçлекен агрономне.
28. Зинаида Димитриевна **Никитинăна** — Энтепе зооветучастокĕн заведующине.
29. Вера Николаевна **Николаевăна** — «Звезда» колхозăн сурăх пăхаканне.
30. Григорий Николаевич **Николаева** — «Комбайн» колхозăн старши конюхне.
31. Елизавета Осиповна **Осиповăна** — МТС трактористкине.
32. Зиновий Сергеевич **Осипова** — райсовет исполкомĕн председательне.
33. Алексей Петрович **Павлова** — МТС трактор бригадин бригадирне.
34. Василий Павлович **Павлова** — МТС механикне.
35. Мария Александровна **Павловăна** — «Социализм» колхозăн ферма заведующине.
36. Андрей Ильич **Плотникова** — Ворошилов ячĕпе тăракан колхозăн ферма заведующине.
37. Иван Фомич **Пупина** — «Звезда» колхозăн хурт-хăмăр пăхаканне.
38. Федор Филимонович **Сирипкина** — Ворошилов ячĕпе тăракан колхозăн ветеринари санитарне.
39. Анна Александровна **Смирновăна** — «Смычка» колхозăн кок-сагыз лартса ÿстерекен звеньевойне.
40. Мария Федоровна **Степановăна** — «Путь Ленина» колхозăн колхозницине.
41. Георгий Николаевич **Стрункова** — МТС трактор бригадин бригадирне.
42. Агрипина Константиновна **Табаковăна** — Ворошилов ячĕпе тăракан колхозăн колхозницине.
43. Василий Владимирович **Указова** — МТС механик-контролерне.
44. Лидия Павловна **Уткинăна** — МТС трактористкине.
45. Евгения Александровна **Федоровăна** — «Автогигант» колхозăн сурăх пăхаканне.
46. Сергей Семенович **Цветкова** — «Автогигант» колхозăн кок-сагыз лартса ÿстерекен звеньевойне.
47. Мария Александровна **Шуйковăна** — «Вторая пятилетка» колхозăн сысна пăхаканне.
48. Прокопий Александрович **Яшина** — МТС директорне.

ТĂВАЙ РАЙОНĔ ТĂРĂХ

1. Тимофей Васильевич **Васильева** — «Красная Чувашия» колхозри пахча-çимĕç бригадин бригадирне.
2. Денис Григорьевич **Григорьева** — Ленин ячĕпе тăракан колхозăн председательне.
3. Александр Леонтьевич **Горшкова** — Чапаев ячĕпе тăракан колхозăн колхозникне.
4. Пустиния Спиридоновна **Демьяновăна** — «Искра Ильича» колхозăн сурăх пăхаканне.
5. Екатерина Димитриевна **Димитриевăна** — «Красная Чувашия» колхозăн сурăх пăхаканне.
6. Василий Ермолаевич **Ермолаева** — «Звезда» колхозăн сурăх пăхаканне.
7. Григорий Иванович **Иванова** — Мичурин ячĕпе тăракан колхозăн председательне.
8. Николай Иванович **Иванова** — Чапаев ячĕпе тăракан колхозăн колхозникне.
9. Петр Иванович **Иванова** — «Красная Чувашия» колхозăн председательне.
10. Устиния Ивановна **Ивановăна** — МТС трактористкине.
11. Иван Николаевич **Козлова** — МТС трактористне.
12. Серафима Федоровна **Кудрявцевăна** — МТС трактористкине.
13. Сергей Александрович **Михайлова** — Тăрмăш госсортучастокĕн заведующине.
14. Александр Сергеевич **Молоствова** — ВКП(б) райкомĕн пĕрремĕш секретарьне.
15. Николай Никифорович **Никифорова** — Ленин ячĕпе тăракан колхозри уйхир бригадин бригадирне.
16. Павел Никонорович **Никонорова** — Чăваш Нăрваш зооветпункчĕн заведующине.
17. Захар Петрович **Петрова** — МТС комбайнерне.
18. Илья Петрович **Петрова** — МТС трактор бригадин бригадирне.
19. Владимир Прокопьевич **Прокопьева** — МТС трактористне.
20. Фекла Порфирьевна **Порфирьевăна** — МТС трактористкине.
21. Илья Порфирьевич **Сафанова** — «Свободный труд» колхозри пахча-çимĕç бригадин бригадирне.
22. Степан Терентьевич **Сыпнаева** — Ленин ячĕпе тăракан колхозăн колхозникне.
23. Александра Федоровна **Федоревăна** — «Красная Чувашия» колхозăн кролик пăхаканне.
24. Анна Яковлевна **Яковлевăна** — ВЛКСМ райкомĕн секретарьне.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1944 çулхи апрелĕн 29-мĕшĕ.

Уралта ылттăн промышленноçĕ пуçланни 200 çул тултарать

Килес çулхи май уйăхĕнче Уралта ылттăн промышленноçĕ пуçланни 200 çул тултарать. 1745 çулта, çуркунне, Екатеринбургран инçех мар вырăнта Березовски завода тунă.

Çак юбилее ирттерме Свердловскра оргбюро тунă. Уралтă ылттăн тупас ĕç мĕнле аталанса пыни çинчен калакан наукăллă-художествăллă статьясемпе историллĕ документсен пысăк сборникне пичетлеме хатĕрлеççĕ. (ТАСС).

ХАСТАРЛĂ КОМСОМОЛКА-ПАТРИОТКА

22 çулти комсомолка — белорусс хĕрĕ **Варя Вырвич** вăрçăччен институтра вĕреннĕ. Вăрçă пуçлансан вăл хăйĕн тантăшĕсемпе пĕрле фронта кайнă.

Çамрăк комсомолкăн-белорускăн хăйĕн тăван çĕрне каяс килсе тăнă. Вăл вара фронт урлă каçнă та партизанка пулса оккупантсене халăхшăн тавăрма тытăннă. Часах вăл Гомель облаçĕнчи Добруш хули районĕнче кĕрешнĕ комсомолецсемпе çамрăксен партизанла отрядне ертсе пыма пуçланă.

Нимĕçсем партизансене йĕрлесе çÿренĕ. Вĕсем Варя Вырвич пуçĕшĕн — «Катя» партизанкăн пуçĕшĕн — пысăк награда сĕннĕ.

Хулара нимĕç коменданчĕн пĕлтерĕвне çыпăçтарса тухнă. Çав пĕлтерÿре Германи командованийĕ «Катяна» тытнăшăн 3.000 марка укçа, 5 пăт тăвар тата 25 гектар çĕр пама пулнă.

Анчах гитлеровецсем паттăр партизансен йĕрне тупайман. Халăхшăн тавăракансем çаплах хăйсен ĕçне туса тăнă.

Чаплă патриотсем паттăр ĕççем нумай тунă. Вĕсем тăшманăн техникăпа çынсем турттарса пыракан темиçе вунă эшелонне ÿпĕнтерсе янă, листовкăсем çыпăçтарса çÿренĕ.

Добруш хулине фашистла нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларсан, Варя Вырвич комсомолăн Добруш райкомĕн руководителĕ пулса ĕçлеме пуçланă.

Ÿкерчĕк çинче: комсомолка-партизанка **«Катя».**

Е. Копыта фотоÿкерчĕкĕ. (ТАСС фотохроники).

ÇАМРĂКСЕН БРИГАДИСЕНЧЕ

Канашри вагонсем юсакан заводри комсомолецсемпе çамрăксен фронтовой бригадисен йышĕ ÿснĕçемĕн ÿссе пырать. Вĕсем пурте тухăçлă ĕçлеççĕ.

Строительство цехĕнчи Андронова юлташ ертсе пыракан фронтовой бригада ĕç нормине 200 процентран кая мар тултарма сăмах панă. Халĕ вăл тăватă норма таран тултарать

Вагонсем юсакан цехри Хасанова, Фролова, Дрозов комсомолецсем ик-виçшер çыншăн ĕçлеççĕ. Комсомолец Севрюк кулленхи нормăна тăтăшах 700-шер процент тултарать. Вăл — цех комсоргĕ. Ăна кура ытти çамрăксем те тăрăшса ĕçлеççĕ.

Забиякин юлташ начальник пулса ĕçлекен цехри токарь-комсомолецсем Нефедовăпа Назаров юлташсем 400-шер процент тултарса ĕçлеççĕ.

В. АКСЕНОВ.

Ют çĕршывсенче

Италири вăрçă ĕçĕсем

СОЮЗНИКСЕН ÇАРĔСЕМ РИМРАН 16 МИЛЯРА

ЛОНДОН, майăн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: тăшман Вальмонтонепе Веллетри линийĕнче, союзниксен çарĕсене малалла кайма чарасшăн хăтланса, хăйĕн мĕнпур вăйĕпе тăрăшать. Çапах та американецсен 5-мĕш армийĕн чаçĕсем Веллетрирен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре чылай малалла куçнă, тăшман хытă хирĕç тăнине çĕмĕре-çĕмĕре тăкса, вĕсем тăшмана çурçĕр еннелле хĕссе пыраççĕ. Акăлчансен 8-мĕш армийĕн çарĕсем Лирипе Сакко шывĕсен улăхĕнче пăртак малалла куçнă. Вальмонтоне туртса илнĕ.

Майăн 28-мĕшĕнче французсен крейсерĕпе эсминецĕ Анциоран çурçĕртерехре тăшманăн артиллери батарейисене пусарса лартнă. Тăшман артиллерийĕн позицийĕсенче пушарсем тухнă, взрывсем пулнă. Çакăнпа пĕрлех снарядсем тăшманăн мототранспортне тÿрех пырса тивнисем пулнă. Майăн 12-мĕшĕнчен пуçласа, союзниксен çар карапĕсем, тип çĕр çинчи çарсене пулăшса пырса, хăйсем çинчи тупăсемпе 7 пин хут ытла харăс персе янă.

Енер союзниксен авиацийĕ кун каçиччен тăшманăн Италири объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбардировщик-истребительсен соединенийĕсем çавăн пекех тата тăшманăн Югославири объекчĕсене те тапаннă.

ЛОНДОН, майăн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Неопольри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: американецсен 5-мĕш армийĕн чаçĕсем тинĕс çыранĕсемпе Веллетри хушшинче Камполеонерен кăнтăртарахра наступлени туса пыраççĕ, вĕсем халĕ Римран 16 миля çурăра кăна.

Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

АНГЛИ БОМБАРДИРОВЩИКĔСЕМ ЛЮДВИГСХАФЕНА ТАПАННИ — АМЕРИКА БОМБАРДИРОВЩИКĔСЕМ НИМĔÇСЕН АВИАЦИ ЗАВОЧĔСЕНЕ ТАПАННИ. — СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔ ВЕНЕР-НЕЙШТАДТ ХУЛИ ÇИНЧЕ

ЛОНДОН, майăн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви çапла пĕлтерет: майăн 29-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англин бомбардировочнăй авиацийĕн самолечĕсем Анжер чугун çул узелне (Франци) вăйлăн тапаннă. Çавăн пекех тата Франци çыранĕнчи вăрçă объекчĕсем çине тата Людвигсхафен хули çине (Германи) бомбăсем пăрахнă. Людвигсхавена питĕ вăйлă тапаннă, ун çине фугаслă бомбăсем нумай пăрахнă. Вăйлă пушарсем тухнă.

ЛОНДОН, майăн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Американецсен Европăри сывлăш-çар вăйĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: «Вĕçекен крепость» тата «Либерейтор» йышши бомбардировщиксен питех те пысăк соединенийĕсем 1.200 истребитель ытла хÿтĕлесе пынипе, нимĕçсен Познаньри, Лейпцигри, Тутоври (Ростокран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре), Коттбусри (Берлинран 95 миля кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре), Зораури (Берлинран 130 миля кăнтăртарахра) авиаци завочĕсене тапаннă.

ЛОНДОН, майăн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: паян союзниксен Вăтаçĕр тинĕс авиацийĕн пысăк соединенийĕсем Винер-Нейштадт хулинчи (Венăран кăнтăртарахра) икĕ авиаци завочĕ çине бомбăсем пăрахнă. Çавăн пекех тата çав районри аэродромсем çине те бомбăсем пăрахнă. Унсăр пуçне, Атцгерсдорфри (Венăран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре) авиаци завочĕ çине бомбăсем пăрахнă. Тапăнура 750 йывăр бомбардировщика яхăн пулнă.

Çав кунах «Либерейтор» йышши бомбардировщиксем икĕ хутчен Югославире нимĕç çарĕсем пухăнса тăнă пунктсене тапаннă.

ГИТЛЕРЛА ХАÇАТСЕМ «ПĂШĂРХАНТАРАКАН ХЫПАРСЕМ» САРĂЛНИПЕ ХĂРАСА ÿКНĔ

СТАМБУЛ, майăн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Нимĕçсем фронтсенче поражениссем тÿснине пула Германипе «союзлă» çĕршывсенче «пăшăрхантаракан хыпарсем» анлăн сарăлнă пирки гитлерла хаçатсем питĕ çиленсе çыраççĕ.

Нимĕçсен Будапештра тухакан «Дейче цейтунг ин Унгарн» ятлă хаçачĕ хăйĕн уместатьинче çапла çырать: «Пĕтĕм Венгрийĕпе пăшăрхантаракан хыпарсем сарăлаççĕ. Вĕсене çынсем юри сараççĕ, çав хыпарсем вара пурне те пăшăрхантараççĕ».

«Дейче цейтунг ин Кроатиен» ятлă гитлерла хаçат та Хорватире «хыпарсем нумай çÿренине» тарăхса çырать. «Хорватсем хăйсен çĕршывĕнчи радиопередачăсемпе канăçмаççĕ, — тесе çырать хаçат, — вĕсем приемниксен стрелкисене кăшт маларах куçараççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем пирĕн тăшман мĕн каланине питĕ илтесшĕн. Çĕнĕ хыпарсене пĕлсе тăраканскерсем, вĕсем вара событисем çинчен калаççĕ, наркăмăш евĕрлĕ хыпарсем сараççĕ».

Гитлеровецсен Румынире тухакан «Бухарестер Тагеблат» ятлă хаçачĕ те çавăн пекех çырать.

Нимĕçсен Белградра тухакан «Домау Цейтунг» ятлă хаçачĕ нумаях пулмасть çапла çырнăччĕ»: «Суя хыпарсем» сарнă пирки Недич влаçĕсем Белград халăхĕ хушшинче çынсене йышлăн арестлеççĕ, тенĕччĕ.

БОЛГАРИРЕ ПРАВИТЕЛЬСТВО ТĂВАЙМАН-ХА

СТАМБУЛ, майăн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Балфов правительство тăвайманни çинчен пĕлтернĕччĕ. Кунта илнĕ хыпарсем тăрăх, çĕнĕ правительствăна тума Болгарин премьер-министрĕ пулма Божилова хушнă. Паян çакă паллă пулнă: Божилов та çĕнĕ правительство тăвайман.

Гитлер агентстви — Германи информаци бюровĕ — Болгарири лару-тăру çинчен пĕлтернĕ. Çав пĕлтерÿрен гитлеровецсем Болгарире халь мĕн тума тăрăшни курăнать. Агентство çапла калать: Болгарире «мĕнпур активлă вăйсене мобилизацилес ĕç» пуçланчĕ, «чи малти вырăна запасри офицерсен организацийĕ, çамрăксен «Бранник» ятлă организацийĕ тата çĕнĕрен тунă «Болгарин халăх союзĕ» ятлă политикăллă организаци тухса тăчĕç». Гитлеровецсем каланă тăрăх, çав организацисен тĕллевĕ — «вăрçăн татăклă тапхăрне хатĕрленесси» тата «çĕршывра тĕрлĕ вырăнсенче государствăна хирĕç пыракан çынсене пĕтерсе лартасси пулать».

Çапла ĕнтĕ, гитлеровецсем халь Болгарири мĕнпур фашистсене тата Германи майлă тăракан çынсене пĕрлештересшĕн, вĕсене власть пуçне тăратасшăн, вĕсем пулăшнипе демократиллĕ тата Гитлера хирĕçле мĕнпур вăйсене аркатса тăкасшăн. Çапла майпа гитлеровецсем Болгарие гитлерла çарсем официальнăй йĕркепе оккупацилемесĕрех Болгари халăхне парăнтарма тата Болгарие Совет Союзне хирĕç вăрçтарма шутлаççĕ.

ÇĔНĔ КĔНЕКЕСЕМ

КОЛХОЗНИКШĔН КИРЛĔ КĔНЕКЕ

А. К. ЕФЕЙКИН. Сумкурăксем тырпул тăшманĕсем. Тираж 4000 экз. Хакĕ 1 тен. 50 пус. Чăвашгосиздат, Шупашкар, 1944 ç.

Çумкурăксем колхоз тырпулне тата колхозниксен пахчисене те пысăк сиен кÿреççĕ. Вăтамран илсессĕн çумкурăксем тырпул тухăçне 15—20 процент таран чакараççĕ. Çавăнпа та çумкурăксемпе кĕрешесси питĕ пысăк ĕç пулса тăрать. Çумкурăксемпе ăнăçлă кĕрешес пулсассăн, çумкурăк уйхирте мĕнле сарăлса пынине, мĕнле ÿснине лайăх пĕлсе тăмалла.

Чăваш ялхуçалăх институчĕн доценчĕ А. К. Ефейкин Чăваш АССР условийĕсене лайăх пĕлет. Вăл Чăваш республикинче чи нумай сарăлнă çумкурăксем çинчен, вĕсемпе мĕнле меслетсемпе кĕрешмелли çинчен çырнă кĕнеке пичетленсе тухнă. Кĕнекере çумкурăксем пысăк сиен кÿни çинчен чи кăтартуллă материалсемпе паллаштарнă, çумкурăксем мĕншĕн тырпул тухăçне чакарнине, тĕрлĕ çумкурăкне пĕтерме мĕнле меслетсем кирлине те лайăх кăтартса панă. «Кĕтмен хăнасем» ятлă уйрăмра пирĕн уйхирсене урăх вырăнсенчен куçса килекен çумкурăксем, раснах Элĕк районĕнчи уйрăм колхозсене унта халиччен пулман çумкурăксем — хирсĕллипе сенĕкле сухăркурăк вăйлăн сарăлса пынине кăтартса панă.

Уя çумкурăк вăррисем кĕрсе туласран сыхланса çулталăк хушшинче мĕн-мĕн туса ирттермеллине кăтартнă, усăллă канашсем панă. Çавăнпа та СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ çумкурăксемпе кĕрешесси çинчен кăçалхи март уйăхĕнче йышăннă постановление пурнăçа кĕртес ĕçре А. К. Ефейкин кĕнеки пысăк усă пама пултарать.

Кĕнекен тепĕр пахалăхĕ çакă пулса тăрать: ăна пурте ăнланмалла, çăмăл чĕлхепе çырнă.

Н. Т.

А. З. ШУЛЬПЕНКОВА. Трахома чирĕ тата унпа кĕрешесси çинчен. Тираж 5000 экз. Хакĕ 50 пус. Чăвашгиз, 1944 çул.

Чăваш АСС Республикин тава тивĕçлĕ врачĕ А. З. Шульпенкова нумай çулсем енĕпе чăвашсем хушшинче чылайранпа ĕçлет. Чирленĕ çынна сыватас енĕпе ĕçленисĕр пуçне чир сарăлса пырассине хирĕç массăллăн кĕрешме кирлине вăл аван пĕлсе тăрать. Трахома чирĕ патша саманинче чăвашсем хушшинче мĕнлĕн питĕ сарăлнине, Октябрьти социализмлă аслă революци хыççăн çак хăрушă чире пĕтерес ĕçре пысăк çитĕнÿсем тунине кăтартса парать. Трахома чирне сарăлма пулăшакан условисене тĕппипех пĕтермешкĕн çемьере, шкулта, ача сачĕсенче тата ытти çĕртсе те тасалăхшăн татăклăн кĕрешмелле.

Кĕнекере кус тытăмĕ çинчен, трахома епле ерсе аталанса пыни çинчен тата ăна эмеллесси çинчен каласа панă. Кĕнеке авторĕ трахома ересрен мĕнле сыхланмалли çинчен тĕплĕ кăтартусем парать. Трахомăпа кĕрешесси çинчен çырнă çак кĕнеке кашни ялта, библиотекăра, ача садĕнче, шкулта, кашни колхозник килĕнчех пулма тивĕç.

Районри коммунистсем вăйлă тырпулшăн кĕрешес ĕçре

Пирĕн районри колхозсем майăн 28-мĕшĕнче çураки ĕçĕсен планне пĕтĕмĕшпех тултарчĕç. Район тĕштырăсем, пахча-çимĕçсемпе техникăллă культурăсем тата выльăх апачĕ 11.800 гектар çине акса хăварчĕ. Фермăсем çумĕнчи участоксене 188 гектар, фронтовиксен çемьисене пулăшма 498 гектар акнă, 210 гектар çинче махорка калчи çитĕнтернĕ. Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнчи историллĕ приказĕпе хавхаланса, районри колхозниксемпе колхозницăсем, трактористсемпе трактористкăсем тата ялхуçалăх специалисчĕсем çуракине кăтартуллă ирттерессишĕн, вăйлă тырпул туса илессишĕн пĕтĕм вăйпа кĕрешрĕç.

Чăнах, çуракин малтанхи кунĕсенче пирĕн ĕçре çитменлĕхсем те пулчĕç. ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çав çитменлĕхсене хăвăрт пĕтермелли майсене кăтартса пачĕ. Ун хыççăн эпир çураки ĕçĕсене хăвăртлатрăмăр, ВКП(б) Обком бюровĕн решенине пурнăçа кĕртме районри пĕтĕм актива, колхозниксемпе колхозницăсене, МТС работникĕсене мобилизацилерĕмĕр. Обком бюровĕн решенине парти райкомĕн ларăвĕнче сÿтсе-явнисĕр пуçне кашни пуçламăш парторганизацинче, кашни колхозра тата бригадăсемпе звеносенче тĕплĕн сÿтсе-яврăмăр, çитменлĕхсене сийĕнчех юсама тытăнтăмăр.

Мĕнле çитменлĕхсем пулчĕç-ха пирĕн ĕçре? Хăшпĕр колхозсенче ĕçе звеносем тăрăх йĕркелеймен пулнă. ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ йышăннă постановление сÿтсе-явнă май, эпир кашни колхозрах уйхирти ĕçе звеносем тăрăх йĕркелесе ятăмăр. Унăн тивлетне сийĕнчех туйса илтĕмĕр. Калинин ячĕпе тăракан колхозри сухаçăсем хăйсене çирĕплетсе панă участоксенче тухăçлă ĕçлерĕç. А. Данилов, З. Григорьева, Г. Яковлев, Т. Евдокимов юлташсем кашни кун 1,30—1,40-шер гектар сухаласа пычĕç.

Колхоз (председателĕ-коммунист Н. Павлов юлташ) социализмлă ăмăртăва лайăххрах сарса ярас шутпа куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялав турĕ. Колхозри бригадăсем çав ялава илессишĕн пĕр-пĕрипе ăмăртса ĕçлерĕç. Ăмăртура иккĕмĕш бригада çĕнтерчĕ. Унти кашни колхозник, кашни колхозница мала тухассишĕн пĕтĕм чун-хавалĕпе кĕрешрĕ, çуракине кăтартуллă ирттернĕ çĕре хăйĕн пултарулăхĕпе хастарлăхне пачĕ. Уйрăмах агитатор-комсомолец Данилов юлташ ырми-канми ĕçлерĕ. Нормăна 120—125 процент тултарса, вăл ытти сухаçăсене хавхалантарса пычĕ.

Çапла вара колхоз пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши тырăсене 8 кун хушшинче акса хăварчĕ. Техникăллă культурăсене те вăхăтра акрĕ, çĕрулми, пахча-çимĕç лартас ĕçсене те вĕçлерĕ.

Колхозра агитациллĕ-массăллă ĕçе витĕмлĕн туса пынă. Стена хаçачĕсене те йĕркеллĕ кăларнă. Фото-хаçат та кăларнă. Унта колхозри чи лайăх стахановецсене кăтартнă.

Калинин ячĕпе тăракан колхоз районра пуриншчен малтан Хисеп хăми çине кĕме тивĕçлĕх илчĕ. Халĕ колхозра калчасене çумкурăксенчен тасатаççĕ, уборкăна хатĕрленеççĕ.

Çуракине кăтартуллă ирттерессишĕн ялти коммунистсемпе комсомолецсем пĕтĕм вăйпа кĕрешрĕç. Именкассинчи «Малалла» колхоз иртнĕ çулсенче кая юлса пыратчĕ. Кăçал кунти коммунистсем начар мар ĕçлерĕç. Парти райкомĕ пулăшнипе пуçламăш парторганизаци, уйрăмах унăн секретарĕ А. Иванов юлташ колхоза малта пыракансен ретне кăларассишĕн тăрăшрĕç. Коммунистсем М. Федоров, О. Матвеев, Ф. Максимова юлташсем тата комсомолка Крылова хĕрÿ ĕçсен тапхăрĕнче хиртен кĕме пĕлмерĕç. Вĕсем хăйсен паха примерĕпе колхозниксене тăрăшса ĕçлеме хавaслантарса пычĕç. Колхозниксене Хĕрлĕ Çар воинĕсен паттăрла ĕçĕсем çинчен куллен ăнлантара-ăнлантара парса, вĕсем колхоз хресчĕнĕсене уйхирте фронтри пекех çине тăрса ĕçлеме çĕклерĕç.

«Малалла» колхоз 326 гектар çуртырри акса хăварчĕ, çуракине 8 кун хушшинче вĕçлерĕ. Иртнĕ çулсенче начар ĕçленĕ «Жнейка», «Красноармеец», «Çĕнĕ ял», «Комбайн» колхозсем те мала тухрĕç. «Жнейка» колхоз председательне И. Петров юлташа тата «Красноармеец» колхоз председательне Архипов юлташа çураки вăхăтĕнче парти ретне илнĕ.

Çуракине кĕске срокра, лайăх пахалăхпа ирттерме МТС колхозсене вăйлăн пулăшрĕ. Чăнах, çуракин малтанхи кунĕсенче тракторсем пурте мар йĕркеллĕ ĕçлерĕç. Ĕçри чăрмавсене пĕтерессишĕн МТС директорĕ-коммунист Константинов юлташ çине тăчĕ. Вăл механиксене, трактор бригадин бригадирĕсене пухса, çуракин малтанхи кунĕсенчи çитменлĕхсем мĕнрен килнине кăтартса пачĕ. Ун хыççăн кашни бригадăрах ВКП(б) Чăваш Обком бюровĕн постановленине сÿтсе-явнă, трактористсемпе трактористкăсем тата механиксем Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса хăйсем çине обязательствăсем илнĕ. Çамрăк та опытсăр трактористсемпе трактористкăсене ĕçре пулăшма опытлă трактористсем çумне çирĕплетнĕ. МТС-ри коммунистсемпе комсомолецсем ĕçре малта пынă. Çапла ĕçленипе МТС çураки планне нумай ирттерсе тултарчĕ. Планпа 3.310 гектар сухаламаллаччĕ. МТС тракторсемпе 4.550 гектар сухаларĕ, çурхи ĕçсен планне 134,3 процент тултарчĕ.

МТС тунă çитĕнÿсен «вăрттăнлăхĕ» мĕнре-ха? Тÿррех калас пулать, çав «вăрттăнлăх» — МТС дирекцийĕпе парторганизаци ĕçе тĕрĕс планланинче, коммунистсемпе комсомолецсем производствăна ытларах хутшăннинче пулчĕ.

МТС-ри 17 коммунистран 12-шĕ трактористсем е бригадирсем пулса ĕçлеççĕ. Кашни коммунист бригадăра агитатор. Вĕсем трактористсене фронтри хыпарсемпе вăхăтра паллаштарса тăраççĕ. Сталин юлташăн Майăн 1-мĕшĕнчи приказне кашни трактористпа трактористкăна тĕплĕн ăнлантарса параççĕ. Вĕсем пурте пĕр тĕллевпе — хĕрÿ ĕçпе тăшмана хăвăртрах çапса аркатма пулăшас тĕллевпе пурăнаççĕ.

Трактористсем ĕç вăхăчĕпе тĕрĕс усă куратчĕç. Тракторсем апат вăхăтĕнче те, смена улшăннă вăхăтра та — нихăçан та чарăнса тăман. Апат çинĕ вăхăтра канма каякан тракторист сухалать, ĕçлеме тытăнаканни вара машинăна хăвăрт пăхса тухса çу сĕрет, крассин ярать. Çапла вара трактор ĕçленĕ вăхăтрах смена улшăнать.

Çуракинче тракторсем талăкра 22 сехет хушши ĕçленĕ, 15—16-шар гектар сухаланă. Нумай бригадăсем плана ирттерсе тултарнă. Коммунистка Е. Иванова ертсе пыракан 9-мĕш номерлĕ бригада мала тухнă. 3 тракторпа ĕçлесе, бригада çураки планне 207,4 процент пурнăçланă, 175 килограмм горючи перекетленĕ.

Комсомолка Елена Николаева СТЗ тракторпа иккĕмĕш çул ĕçлет. Вăл техникăна питех те хăвăрт вĕренсе пырать, трактора лайăх пăхса усрать, ĕçе тĕплĕ тăвать. Пурне те паллă мар-и: хăшпĕр трактористсем кĕтессенче çаврăннă чухне уйрăмах тĕплĕ сухалаймаççĕ. Николаевăна кĕтессенче шăйрăклă сухаланăшăн ÿпкелени пулман. Вăл çураки планне 198 процент тултарчĕ.

Çавăн пекех Хрисанов коммунист «У—2» маркăллă тракторпа çурхи ĕçсен планне 200 процент пурнăçларĕ. Иртнĕ çул хĕрарăм-трактористкăсен ăмăртăвĕнче мала тухса ВЛКСМ Центральный Комитечĕн Хисеплĕ грамотине илнĕ трактористка Серафима Иванова плана 256 процент тултарчĕ.

Çавăн пекех 13-мĕш номерлĕ бригадăри старши тракторист коммунист В. Егоров пултарулла ĕçленине палăртмалла. Вăл çамрăк трактористсене сахал мар пулăшать, вĕсене ĕçĕн кашни сехечĕпе туллин усă курма вĕрентет. Çуракинче вăл 4-мĕш номерлĕ тракторпа 42 гектар сухалас вырăнне 104 гектар сухаланă.

Вăрçă кунĕ пысăк йывăрлăхсене çĕнтерсе, МТС коллективĕ чаплă çĕнтерÿ турĕ. Паян эпир унти нумай трактористсемпе трактористкăсен ячĕсене мухтаса асăнма пултаратпăр. Вĕсем, пархатарлă ĕçлесе, Тăван çĕршыв умĕнчи тивĕçне чыслăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. 8-мĕш номерлĕ бригадăра хĕрарăмсем ытларах ĕçлеççĕ. Чăваш хĕрупраçĕсем! Вĕсенчен чылайĕшĕ трактор рулĕ умне те вăрçăн йывăр кунĕсенче кăна тăнă, апла пулин те çак машинăн кăткăс техникипе кĕске вăхăтрах вĕренсе çитнĕ. Бригада çураки планне 170 процент тултарнă, 500 килограмм горючи перекетлесе хăварнă. Çавăн пекех Е. Никифорова, К. Кондратьева, Т. Николаева трактористкăсем уйрăмах тăрăшса ĕçленине палăртмалла.

Тракторсене йĕркеллĕ ĕçлеттересси кусса çÿрекен мастерской йĕркеллĕ ĕçленинчен те килчĕ. МТС механикĕсем, старши трактористсем çамрăк трактористсене пулăшас тĕлĕшпе мухтава тивĕçлĕн ĕçлерĕç. Уйрăмах мастерской заведующийĕ коммунист А. Павлов лайăх ĕçленине палăртмалла.

Çураки вăхăтĕнче агитациллĕ-массăллă ĕçе вăйлатрăмăр. Çуракине тухиччен агитколлектив руководителĕсене пухса канашлу ирттернĕ, ĕç планĕсене çирĕплетнĕ, вĕсене агитаци ĕçĕнче кирлĕ пулакан материалсем хатĕрлесе панă. Çураки вăхăтĕнче 23 агитколлектив ĕçлерĕ. Вĕсен членĕсем уйхирте ĕçлекенсем патĕнче пулчĕç. Вĕсем Сталин юлташăн приказне кашни колхозник патне çитерчĕ, фронтри, çĕршыври тата тĕнчери лару-тăру çинчен ăнлантарса панă, малта пыракансен опытне сарнă, çитменлĕхсене сийĕнчех пĕтерессишĕн кĕрешнĕ. Типсырма ялсоветĕнчи «Пахарь» колхозри 2-мĕш бригадăра, сăмахран, ăшăх сухаланă тĕслĕхсем пулнă. Агитатор Андреев ăна сийĕнчех асăрханă. Ун хыççăн колхозниксем çав çитменлĕхе хăвăрт пĕтернĕ.

Çапла ĕнтĕ, районри парторганизаци вăйлă тырпулшăн кĕрешес ĕçре малтанхи утăма турĕ. Пирĕн умра татах та ответлăрах задачăсем тăраççĕ. Пирĕн акнă тырпулсене аталантармалла, уйхирсене çумкурăкран тасатмалла, уборкăна тимлĕн хатĕрленсе çитмелле. Паянхи кун тĕлне çак ĕçсем чылай колхозсенче çителĕксĕр пулса пыраççĕ-ха. Малта пыракан колхозсем кăна ирхи çĕртме тума тытăнчĕç. Паянхи кун тĕлне районри колхозсем пурĕ 100 гектар ытларах ирхи çĕртме тунă.

Çуракинчи пĕтĕм ĕçе эпир ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «1944 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсен планĕ çинчен» йышăннă постановленине пурнăçа кĕртес тĕллевпе пăхăнтарса пытăмăр. Агротехника правилисене пурнăçа кĕртсе пырса, эпир кашни гектартан 100 пăтран кая мар тĕштырă туса илессишĕн кĕрешетпĕр, ку тĕлĕшпе Çĕрпÿ районĕпе ăмăртатпăр. Районри кашни колхоз ăмăртура мала тухассишĕн кĕрешет.

Пирĕн тăван республика çийĕнче Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавĕ ялкăшса тăрать. Пирĕн колхозниксем çак чаплă наградăна малашне те хамăр республикăрах хăварассишĕн мĕнпур вăя хурса кĕрешеççĕ.

Н. ГРИГОРЬЕВ,
ВКП(б) Красноармейски райкомĕн секретарĕ.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0— 67, заместительпе секретарĕн — 4— 26, парти пурнăс пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. 6. 59Х42 п. л. Тираж 14.400 экз.